## УХСАЙ ЯККĂВНЕ

Салам сана, Якку пиччемĕр!
Чăваш чапне çĕкле-çĕкле,
Кунçул васканине сисмесĕр,
Ак эс те çитрĕн çитмĕле.

Ту урлă çул выртать. Çав тăвăн
Чи тăрринче тăратăн эс.
Ытарайми Тăван çĕршывăн
Ытарайми пин-пин кĕтес.

Пĕри вăл санăн — Пушкăрт енĕ.
Вуншар çăлкуçлă Слакпуçра
Аçу-аннÿ сана сиктернĕ
Юмах-халаплă сăпкара.

Пĕр классик çеç сахал-мĕн пулнă,
Ик классик парăр Слакпуçа!
...Эй, ыр чĕреллĕ, тулăх чунлă
Слакпуç, Слакпуç, тайма пуçах.

Тавах сана, Октябрь çилĕ!
Поэтсене çунат парса,
Эс вĕсене вĕçтернĕ çӳллĕ,
Юрлаччăр, тенĕ, савăнса.

Юрларăн эс, Ухсай пиччемĕр,
Хĕрӳ ĕçпе малашлăха
Утмашкăн ывăнма пĕлмесĕр
Эс чĕнтĕн пирĕн халăха.

Октябрьшĕн, çĕн саманашăн
Хыпса ĕçлерĕн Кĕлпукпа
Пур халăхпа пĕр тан пуласшăн,
Телей тупасшăн ушкăнпа.

Тăван çĕршыв вута кĕрсессĕн,
Эс хăвăн ата кунчинчен
Тетрадь илсе, шав йĕркелерĕн
Йыхравлă сăвă кунсерен.

Çĕнтерчĕ халăх, паттăр халăх...
«Куç пек упрар, туссем, мире,
Тĕп пултăр вăрçă, курайманлăх!» —
Тесе вĕрентрĕн эс пире.

Вĕрентрĕн эс
Таса чĕреллĕ,
Тӳп-тӳрĕ чунлă пурăнма,
Чăваш ятне
Хитре, йĕркеллĕ,
Сăваплă, чыслă упрама.

Вĕрентрĕн эс: ҫуратнă ҫĕрĕн
Чăн илемне курас тесен,
Юрат ăна, сипле — вăл пирĕн
Тăван сăпка мĕн ĕмĕртен.

Ачалăхра ху ҫутнă ҫăлтăр
Вут-хĕм сапса ҫиҫет паян.
Тӳпӳ ялан сенкеррĕн ҫунтăр,
Ан тĕксĕмлентĕр нихăҫан.

Сан уяву — Чăваш уявĕ,
Чĕре юрлать кăкăрсенче.
Эс — халăх ывăлĕ, мухтавĕ,
Тавах сана, Якку пичче!

1981 ҫул, ноябрь.